Профилактика операцийĕн пĕтĕмлетĕвĕ

# Килти трактор та юсавлă пулмалла

***Çу уйăхĕн виççĕмĕш вунă кунлăхне кĕтĕмĕр. Чылай хирсенче ял ĕçченĕ çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ те ĕнтĕ. Унта хутшăннă ял хуçалăх техники паян «симĕс ĕç çине» хатĕрленме пуçлать. Анчах техникăпа ĕçлекенсем хушшинче тата вĕсен харпăрлăх хуçисем техникăпа усă курас правилăсене пăхăнассинче пурте йĕркеллех-и? Çак ыйтупа Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен транспорта тата ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕ тăтăшах тĕрĕслевсем ирттерсе тăрать. Акă, ака уйăхĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса çу уйăхĕн 15-мĕшĕччен асăннă инспекци республикăра уйрăм çын харпăрлăхĕнчи тракторсемпе вĕсен прицепĕсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе «Частник» профилактика операцийĕ ирттерчĕ. Асăннă уйăх кăтартăвĕсем Муркаш районĕ тĕлĕшпе еплерех-ха? Çак ыйту çине хурав шыраса патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕпе С. А. НИКОЛАЕВПА калаçу ирттертĕмĕр.***

**– Сергей Александрович, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчипе пĕрлех уйрăм çынсен харпăрлăхĕнче те трактор-прицепсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника йышланни сирĕн ĕç çине тӳрремĕнех витĕм кӳрет-тăр. Тĕрĕс шутлатăп пуль?**

– Сирĕн шухăшăрпа килĕшетĕп. Çынсен харпăрлăхĕнче техника хатĕрĕсем йышланни пирĕн халăхăн пурнăç шайĕ ӳснине çирĕплетет. Ку лайăх-ха, анчах пурнăç шайĕ хăпарнипе пĕрлех яваплăха ӳстерни те ытлашши пулмĕччĕ. Çакă «Частник» профилактика операцийĕнче аван курăнчĕ.

Тракторсем йышланнă тенине вĕсен хисепĕпе кăтартсан аванрах курăнать. Акă паянхи куна районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе уйрăм çынсен харпăрлăхĕнче пурĕ пин ытла единица трактор-прицеп пулсан, уйрăм граждансен харпăрлăхĕнче кăна вĕсем 617 единица шутланаççĕ. Куратăр ĕнтĕ, ял çынни çĕр ĕçĕ ĕçлеме ытларах та ытларах техника туянать. Вĕсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнни вара уйрăм ыйту.

**– Уйăхлăх вăхăтĕнче техника харпăрлăхра тытакан граждансем йĕрке пăснине тупса палăртни нумай пулчĕ-и?**

– Сахал тесе калас килместь. Операци пынă тапхăрта эпир çурхи ака-суха ĕçĕсене хутшăнакан 73 трактора чарса тĕрĕслерĕмĕр. Вĕсенчен 13-шĕ патшалăх техника тĕрĕслевне тăмасăрах «ĕçе» тухни палăрчĕ. Çавăнпа та вĕсем трактора эксплуатацилеме ирĕк паракан талонсемсĕрехчĕ. Кунсăр пуçне 9 тĕслĕхре трактористсем çул-йĕр правилисене пăсни, 3 механизатор хăрушсăрлăх техникине пăхăнманни, иккĕшĕ регистраци правилисем çине алă сулни куç умне пулчĕ. Вĕсемпе пĕрлех регистраци документчĕсемсĕр 6 трактор çула тухнăччĕ, виççĕшĕнче вара механизаторсем хăйсемпе пĕрле тракторист удостоверенийĕсем «илме мансах» ĕçе кайма тухни палăрчĕ.

Йĕркене уйрăмах сĕмсĕррĕн пăсакансенне вара икĕ хутчен тракторĕсене эксплуатацилеме чармах тиврĕ. Вĕсемсĕр пуçне тĕрĕслевсем вăхăтĕнче çул-йĕр, хăрушсăрлăх тата регистраци правилисене пăснăшăн 15 çынна административлă майпа ответ тыттартăмăр.

Халĕ асăннă çитменлĕхсем тата вĕсемшĕн явап тыттарнисем мĕн пур трактор хуçисене малашне хуçа туйăмне ӳстерме ыйтаççĕ. Çакна районта пурăнакансем ăнланасса шанатăп.

Çакна та каласа хăвармалла, профилактика операцийĕ вăхăтĕнче унччен регистрацилемен 5 единицăна тупса палăртрăмăр.

**– Сăмаха вĕçлесе мĕн каланнă пулăттăр?**

– Çурхи ака-суха ĕçĕсем кунсерен хыçа юлса пыраççĕ. Анчах çакă ял хуçалăхĕнче тракторсемпе усă курса ĕçлемелли ĕçсем сахалланнине пĕлтермест. Умра – ут çи. Унта тухакан тракторсем те юсавлăх ыйтăвĕпе тата хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассипе кая ан юлччăр. Ку вăл çынсен сывлăхĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Пирĕн пата çырнăччĕ

# Пылĕ тутлă та...

***Хурт-хăмăр продукцийĕ этемшĕн питĕ усăллă, анчах туянма йӳнех мар. Эпĕ вĕсене килте ĕрчетесшĕн. Хурт-хăмăр инвентарьне ăçта туянма пулать-ши?***

**Р. КУЗИНА.**
Токшик ялĕ.

Муркашрах хурт-хăмăр кантурĕ пур. Кунти ĕçченсем сире ку енĕпе пулăшма пултараççĕ. Вĕсемпе çыхăнма ыйтатпăр.

***Кӳршĕсем вĕллесем тытаççĕ. Пĕрисен тăхăр, теприсен пилĕк вĕлле. Çулла пахчана тухаймастпăр.***
**(Автор ятне те адресне те кăтартма ыйтмарĕ.)**

Хула строительствине проектламалли республикăри нормативсемпе килĕшӳллĕн утарсемпе уйрăм вĕллесене пурăнмалли зонăсенче вырнаçтарма юрамасть. Ял территорийĕсенче вĕсене пурăнмалли çуртран 100 метртан кая мар инçĕшне лартма хушаççĕ.

**БУХГАЛТЕРСКИЙ БАЛАНС**
**на 31 Декабря 2008 г.**

| | | | КОДЫ |
|---|---|---|---|
| | | Форма №1 по ОКУД | 0710001 |
| | | Дата (год, месяц, число) | 2008\|12\|31 |
| Организация | ОАО "Моргаушский кирпичный завод" | по ОКПО | 03895998 |
| Идентификационный номер налогоплательщика | | ИНН | 2112000997\211201001 |
| Вид деятельности | Производство кирпича и прочих строительных изделий | по ОКВЭД | 26.40 |
| Организационно-правовая форма / форма собственности | смешанная | по ОКОПФ / ОКФС | 47 / 49 |
| Единица измерения | млн руб | по ОКЕИ | 385 |

Местонахождение (адрес)
Чувашская Респ., Моргаушский, с.Моргауши, Восточная, д. 1

Дата утверждения 23.04.2009
Дата отправки / принятия . .

| АКТИВ | Код показателя | На начало отчетного года | На конец отчетного периода |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| **I. Внеоборотные активы** | | | |
| Основные средства | 120 | 10 | 13 |
| **Итого по разделу I** | **190** | **10** | **13** |
| **II. Оборотные активы** | | | |
| Запасы | 210 | 5 | 6 |
| в том числе: | | | |
| сырье, материалы и другие аналогичные ценности | 211 | 2 | 2 |
| готовая продукция и товары для перепродажи | 214 | 3 | 4 |
| Дебиторская задолженность (платежи по которой ожидаются в течение 12 месяцев после отчетной даты) | 240 | 4 | 10 |
| в том числе: | | | |
| покупатели и заказчики | 241 | 2 | 8 |
| Денежные средства | 260 | 1 | - |
| Прочие оборотные активы | 270 | - | 2 |
| **Итого по разделу II** | **290** | **10** | **18** |
| **БАЛАНС** | **300** | **20** | **31** |

Форма 0710001 с.2

| ПАССИВ | Код строки | На начало отчетного года | На конец отчетного периода |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| **III. Капитал и резервы** | | | |
| Уставный капитал | 410 | 3 | 3 |
| Добавочный капитал | 420 | 2 | 2 |
| Нераспределенная прибыль (непокрытый убыток) | 470 | 6 | 13 |
| **Итого по разделу III** | **490** | **11** | **18** |
| **IV. Долгосрочные обязательства** | | | |
| **Итого по разделу IV** | **590** | **-** | **-** |
| **V. Краткосрочные обязательства** | | | |
| Займы и кредиты | 610 | 4 | 5 |
| Кредиторская задолженность | 620 | 5 | 8 |
| в том числе: | | | |
| поставщики и подрядчики | 621 | - | 3 |
| задолженность перед персоналом организации | 622 | 1 | 1 |
| задолженность по налогам и сборам | 624 | 1 | 2 |
| прочие кредиторы | 625 | 3 | 2 |
| **Итого по разделу V** | **690** | **9** | **14** |
| **БАЛАНС** | **700** | **20** | **31** |

**Руководитель** (подпись) **Тукмаков Владимир Петрович** (расшифровка подписи) **Главный бухгалтер** (подпись) **Антонова Раиса Александровна** (расшифровка подписи)

**16 Марта 2009 г.**

**ОТЧЕТ О ПРИБЫЛЯХ И УБЫТКАХ**
**за период с 1 января по 31 декабря 2008 г.**

| | | | КОДЫ |
|---|---|---|---|
| | | Форма №2 по ОКУД | 0710002 |
| | | Дата (год, месяц, число) | 2008 / 12 / 31 |
| Организация | ОАО "Моргаушский кирпичный завод" | по ОКПО | 03895998 |
| Идентификационный номер налогоплательщика | | ИНН | 2112000997\211201001 |
| Вид деятельности | Производство кирпича и прочих строительных изделий | по ОКВЭД | 26.40 |
| Организационно-правовая форма / форма собственности | смешанная | по ОКОПФ / ОКФС | 47 / 49 |
| Единица измерения: | млн. руб. | по ОКЕИ | 385 |

| Показатель: наименование | код | За отчетный период | За аналогичный период предыдущего года |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| **Доходы и расходы по обычным видам деятельности** | | | |
| Выручка (нетто) от продажи товаров, продукции, работ, услуг (за минусом налога на добавленную стоимость, акцизов и аналогичных обязательных платежей) | 010 | 87 | 54 |
| Себестоимость проданных товаров, продукции, работ, услуг | 020 | (57) | (38) |
| Валовая прибыль | 029 | 30 | 16 |
| Коммерческие расходы | 030 | (4) | (2) |
| Управленческие расходы | 040 | (9) | (6) |
| Прибыль (убыток) от продаж | 050 | 17 | 8 |
| **Прочие доходы и расходы** | | | |
| Прочие доходы | 090 | 3 | 2 |
| Прочие расходы | 100 | (10) | (3) |
| **Прибыль (убыток) до налогообложения** | 140 | 10 | 7 |
| Текущий налог на прибыль | 150 | (3) | (1) |
| **Чистая прибыль (убыток) отчетного периода** | 190 | 7 | 6 |

Форма 0710002 с.2

**РАСШИФРОВКА ОТДЕЛЬНЫХ ПРИБЫЛЕЙ И УБЫТКОВ**

| Показатель: наименование | код | За отчетный период: прибыль | За отчетный период: убыток | За аналогичный период предыдущего года: прибыль | За аналогичный период предыдущего года: убыток |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
| Отчисления в оценочные резервы | 250 | X | 5 | X | - |

**Руководитель** (подпись) **Тукмаков Владимир Петрович** (расшифровка подписи) **Главный** (подпись) **Антонова Раиса Александровна** (расшифровка подписи)

**16 Марта 2009 г.**

г. Чебоксары
№ 45-04/2009
21 апреля 2009 г.

**АУДИТОРСКОЕ ЗАКЛЮЧЕНИЕ**
**по финансовой (бухгалтерской) отчетности**

**Адресат: Исполнительный орган**
**ОАО «Моргаушский кирпичный завод»**
**Аудитор:**

1. Наименование аудиторской фирмы: ООО «Гарант-консалтинг».
2. Юридический адрес: 428000, г. Чебоксары, ул. Энгельса, д. 15.
3. Контактный телефон: (8352)55-46-74, 57-11-22.
4. Лицензия на проведение общего аудита от 9 декабря 2003 г. Е 005327 выдана Центральной аттестационно-лицензионной аудиторской комиссией Минфина РФ сроком на пять лет. Внесена в реестр лицензий 9 декабря 2004 года.
5. Свидетельство о государственной регистрации Общества с ограниченной ответственностью «Гарант-консалтинг» от 3 августа 2000 г., серия ООО № 1171 выдано Администрацией Ленинского района г. Чебоксары.
6. Банковские реквизиты ООО «Гарант-консалтинг»: ИНН 2128036886, расчетный счет 40702810975220100788 в Чувашском ОСБ № 8613, корр. счет 30101810300000000609, БИК 049706609.
7. В аудите принимали участие:

| № п/п | Ф.И.О. специалиста | Данные квалификационного аттестата аудитора | Обязанности в ходе проведения аудита |
|---|---|---|---|
| 1. | Кретова Татьяна Владимировна | № К 007556 от 27.07.00 | Руководитель аудиторской проверки |
| 2. | Елисеева Вера Михайловна | | Ассистент аудитора |

**Аудируемое лицо**:
1. Наименование фирмы: ОАО «Моргаушский кирпичный завод».
2. Юридический адрес: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Восточная, 1.

Суд приставĕсен районти пайĕнчен

# Поручитель пулма çăмăл-и?

Çĕршыври финанс лару-тăрăвĕ йывăр лару-тăрурине кура нумай заемщиксем хăйсем вăхăтра илнĕ кредичĕсене тӳлеймеççĕ. Çавăнпа та кредит организацийĕсем парăм суммисене шыраса илме ыйтса суд приставĕсен службине ытларах та ытларах документсем тăратма пуçларĕç. Çакăн пекки те пулкалать: кредит илекен хăй тӳлеме пултарайманран парăма поручительсенчен шыраса илеççĕ.

Районти суд приставĕсен ĕç тăвакан приставĕсем кредит тӳлеймен заемщикăн пурлăхĕнчи йăла техники, автотранспорт тата ытти пурлăх çине арест хураççĕ. Çакăн пек чухне поручительсем хăйсене мĕнле яваплăх кĕтнине туймаççĕ те.

Суд приставĕсен вара кредит илекенсен поручителĕсем пулнă çывăх тăванĕсемпе тĕл пулма тивет. Суд приставĕсем кун пек чух поручителĕн ĕç укçинчен парăма тытса юлма постановлени кăлараççĕ.

Суд приставĕсен Муркашри пайĕн практикинче кредит илекен пачах тӳлеймен пирки парăма пĕтĕмпех поручительсем тӳлени те пулчĕ. Кун пек чух поручительсем çав суммăна судпа хăйсен тăванĕнчен шыраса илме пултараççĕ.

Çапла вара сире поручитель пулма чĕнсен кредит илекен парăма тӳлеме пултарайман чух çак яваплăх сирĕн çине те тиенессе манма юрамасть.

# Кăсăклантаракан ыйтусем пур пулсан

Суд приставĕсен тивĕçĕ граждансемпе организацисен прависемпе ирĕклĕхĕсене тата саккунлă интересĕсене хӳтĕлесси пулса тăрать. Çавна май пирĕн задача – суд акчĕсене, ытти органсемпе должноçри çынсен акчĕсене ответлисем тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçланине контроллесси. Çак актсене ирĕксĕрлесе пурнăçлаттарассин ĕçĕсене районта суд приставĕсен районти пайĕ пурнăçлать.

Паллă ĕнтĕ, суд приставĕсем хăйсен тивĕçне пурнăçланă май граждансен тĕрлĕрен ыйтусем те çуралма пултараççĕ. Çавна май района майăн 20-мĕшĕнче суд приставĕсен Федераллă службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçи, тĕп суд приставĕ Игорь Юрьевич Корсаков килет, вăл 13 сехетрен тытăнса 15 сехетчен суд приставĕсен районти пайĕнче (адресĕ: Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 5-мĕш çурт) районти граждансене йышăнать.

**Е. ИВАНОВА,**
**суд приставĕсен районти пайĕн пуçлăхĕ, аслă суд приставĕ.**

Пирĕн истори – пирĕн кун-çул

# Шурча вăрçи – тăван ен палли

Вуншар, çĕршер, пиншер çул иртсен те историре пулнă палăрăмлă пулăмсем халăхăмăр асĕнчен çухалмаççĕ. Çавăн йышшисенчен пĕри вăл – Шурча вăрçи. Пирĕн районта пурăнакансенчен чылайăшĕ ун пирки илтнĕ ĕнтĕ, хăшĕсем унăн историне те пĕлеççĕ-тăр, анчах хăшĕсем кăна. Çак çитменлĕхе пĕтерме пуçларăм та хамăн паянхи калаçăва.

Вун тăххăрмĕш ĕмĕр тĕлне Раççейри хресченсем виçĕ тĕрлисем шутланнă. Пĕрремĕшсем – помещик хресченĕсем. Вĕсен хăйсен çĕрĕсĕр пуçне помещик çĕрĕ çинче ĕçлесе памалла пулнă. Тепĕр чух хуçасем хресченсене хăйсен çĕрĕсем çинче эрнере 4-5 кун хушши те ĕçлеттернĕ. Çапла вара хресченĕн хăй çĕрĕ çинче ĕçлеме вăхăчĕ калама çук сахал юлнă. Вăтамран хресченĕн помещикĕн 5 гектар çĕрне ĕçлесе пама тивнĕ.

Иккĕмĕшсем – удельнăй хресченсем. Вĕсем усă куракан çĕр патша çĕрĕ шутланнă. Апла пулин те вĕсем патшалăха ытти хресченсем тӳлекен парăмсене те тӳлесе тăнă.

Унсăр пуçне 1827 çулта туса хунă йĕркепе кашни ял общининчех общество çĕрĕ пулнă. Вăл çĕр çинче халăхăн ĕçлесе пурăнмалла пулнă. Туса илнĕ тырри вара патша пурлăхне кайнă.

Пирĕн район тăрăхĕнчи хресченсем, тĕпрен илсен, патшалăх хресченĕсем шутланнă. Вĕсене «казеннные крестьяне» тенĕ. Патшалăх хресченĕсен те кашни çын пуçне тивекен парăма помещиксем патĕнче ĕçлекен тата удельнăй хресченсем пекех тӳлеме тивнĕ. Унсăр пуçне тĕрлĕ вак-тĕвек тӳлевсем, ĕçлесе памаллисем 20 тĕслĕ таранах пуçтарăннă.

Патшалăх хресченĕсем усă куракан çĕрĕн хуçи патшалăх пурлăхĕн министерстви пулнă. Патшалăх пурлăхĕн министрĕ Киселев пуçарнипе çĕр-шывра черетлĕ реформа ирттернĕ. Вăл Хусанта патшалăх пурлăхĕн палатине туса хунă. Уессемпе вулăссенче çав вăхăтра чылай улшăнусем тунă. Вĕсенчен пĕри вăл – ял обществисене пысăклатни. Оринин тăрăхĕнче, тĕслĕхрен, Большеоринински тата Малооринински обществăсене тунă. Пурлăх палатине тата ăна пăхăнса тăракан органсене хресченсен шучĕпе тытса тăмалла пулнă. Урăхла каласан, хресченсен çĕнĕ парăм хушăннă.

1839 çулта патшалăх хресченĕсен шутланакан уйсенче те община çĕрĕсем туса хума йышăну тухнă. Вăл çĕрсене «общественные запашки» тенĕ. Çавна тума чи малтанах хресченсен харпăрлăхĕнчи çĕрсене татса памалла пулнă. Çĕнĕ йĕркепе халăхăн çав «общественные запашки» тенĕ çĕрсем çинче ĕçлесе тыр-пул çитĕнтермелле-мĕн, анчах ăна халăха валеçме юраман, ятарласа тунă «магазин» текен складсене хумалла иккен. Çав çĕр çинчех чиновниксем çĕр ĕçченне çĕр улми лартса ӳстерме те хушнă. Чăннипе каласан чăваш хресченĕсем çĕр улмие унччченех хăйсен пахчисенче лартса ӳстерме пуçланă. Н. Ашмарин çырнă тăрăх чăвашсем 1846 çул тĕлне пур çĕрте те çĕр улми лартса туса илнĕ.

Хресченсене нумай çĕнĕлĕхсенчен ытларах çав «общественные запашки» тума çĕр уйăрса пама йышăнни тарăхтарнă. Вĕсем ăна хирĕç пулнă. Пирĕн тăрăхра, Раççейри ытти вырăнсемпе танлаштарсан, пĕр çын пуçне çĕр виçĕ хут сахалрах тивнĕ. Шутласа пăхнă тăрăх хресченсен çĕрĕ татах пĕрре-вунулттăмĕш чухлĕ пĕчĕкленмелле иккен. Чăваш тăрăхĕнче общество çĕрĕсем тума хресченсенчен çĕр татса илнĕ хыççăн юлнă çĕре хресченсем хушшинче тепĕр хут йĕркелемесĕр май килмен. Çакна кура 1840-1842 çулсенче чылай кĕпĕрнесенче Киселев министр сĕннĕ çĕнĕлĕхсене хирĕçлесе хресченсен пăлхавĕсем пулса иртнĕ.

1841 çулхи кĕркунне «общественные запашки» тенине тăвас мар тесе, çав йĕркене тăвасран пире хăтарччăр тесе çырнă хутсемпе хресченсем Хусана пыма пуçланă. Çак вăхăта халăх хушшинче тата хресченсен çĕрĕсемпе обществăлла çĕрсем туса хураççĕ те, кайран хăйсене, патшалăх хресченĕсене, удельнăй хресченсем майлă туса хураççĕ тенĕ сăмах сарăлнă. Çакна хирĕçлесе 1842 çулта Чăваш çĕр-шывĕнче 200 ытла ялта пăлхавсем пулса иртнĕ. Хресченсем «магазин» текен складсенчи тырра валеçме, çĕнĕ обществăлла йĕрке валли пухнă укçана каялла салатма тытăннă.

1842 çулхи апрель-май уйăхĕсенче Етĕрне уесĕнчи 8 вулăсра халăх пăлханнă. Вĕсем обществăлла çĕнĕ йĕрке валли укçа тата çĕр уйăрса пама килĕшмен çеç мар, влаç представителĕсемпе вĕсен хушăвĕсене те пăхăнман. Асакасси вулăсĕнчи хресченсем йĕрке тума пынă казаксене тытса хĕненĕ. Майăн 12-мĕшĕнче Асакасси вулăсне Хусантан салтаксен отрячĕ килет. Ытти вулăссенчен те полици командисем çитеççĕ. Çапла вара вулăсра салтаксемпе казаксен тата полицайсен пĕрлехи шучĕ 150 çынна çитет. Тепĕ икĕ кунтан Етĕрне уесне Хусантан тата 150 салтак килсе çитет. Çапла майпа вулăсри хĕçпăшаллă вăйсен йышĕ 400 çынна çывхарать. Майăн 16-мĕшĕнче Мăньял патне 6 пин хресчен пухăннă. Вĕсемпе хĕçпăшаллисем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Çавна майлă ĕçсем ытти хăш-пĕр уессенче те пулнă.

**(Малалли пулать).**

**И. ВЯЗОВ.**